**Рабочая программа**

**по учебному предмету «Литературное чтение на чувашском языке » в 1- 4 классах (предметная область «Родной язык и литературное чтение на родном языке»)**

***Рабочую программу составили***
***учителя начальных классов***
***МБОУ «Еметкинская средняя общеобразовательная школа»***
***Козловского района Чувашской Республики***

Рабочая программа по литературному чтению (на чув. языке) для 1-4 классов составлена в соответствии с Федеральным государственным образовательным стандартом начального общего образования, на основе Программы («Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем», чăваш шкулĕн I–IV классем валли. М.К. Волков, Л.П.Сергеев, Т. В. Артемьева, О. И. Печников, Кульева А. Р.Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви: 2013 çул).

**Программăна пурнăçлама çак вĕренӳ пособийĕсемпе усă курнă:**

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ (Зернышко). 1 класс. 1-мĕшпе 2-мĕш пайĕсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

Т.В.Артемьева, О.И.Печников. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Ешĕл калча. 2 класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-тви, 2014;

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Ылтăн пучах. 3-мĕш класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Пучах çумне пучах. 4-мĕш класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

## 1. Ачасенчен 1-4 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем

***1 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем***

**Харкамлăх результачĕсем:**

- вĕренекенсен социаллă тата кăмăл-сипет опычĕ пуянланса пыни;
- ачасем çитĕннĕ май этемлĕхĕн литература пуянлăхне ăнланма: хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;
- вулав хатĕрĕсем урлă ачасен чунĕнче çынлăх, тивĕçлĕхпе яваплăх туйăмĕсем аталанса пыма пуçлани, пурнăçра лайăххипе начаррине, ыррипе усаллине уйăрма ăнтăлни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- вĕренекенсем ăс-тăн тĕлшĕнчен аталанса пыни;
- пуплев ĕç-хĕлĕн пур тĕсĕсем те аталанса пыни; ятарлă ăнлавсемпе терминсен пĕлтерĕшĕсене уçăмласа ăша хывма хăнăхса пыни;
- ачасем ăслав ĕçĕпе кăсăкланма пуçлани;
- вĕрену ăслай- хăнăхăвĕсем йĕркеленме пуçлани.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

-ачасен хăйсен усĕмне тивĕçтерекен илемлĕ хайлавсене итлес-вулас кăмăл амаланни;
- калăпăшĕпе пысăках маар, ансат сюжетпа ансат интригăллă, ансат жанлрă илемлĕ хайлавсене итлесе е вуласа йышăнма, ăнланма, туйса илме вĕренсе пыни;
- илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланни: проза та поэзи хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне туйма пуçланни;
- литература жанрĕсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнланăвĕ калăпланма пуçлани;
- илемлĕ хайлавпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпланни, хайлавсен содержанине ăса хывмалли тата асăмламалли мелсĕне вĕренсе пыни;

- ача хӑй те хайлас ӗҫе явӑҫма сӗмленни.

**2 класран вӗренсе тухнӑ тӗле кӗтекен результатсем**

**Харкамлӑх результачӗсем:**

- сӑмах искусствипе киленме вӗренсе пыни;
- тӑван халӑх тата куршӗ халӑхсен культурине хисеплеме, пуринпе те тусӗмлӗ те ҫураҫуллӑ пулма хӑнӑхса пыни;
- илемлӗ хайлавсем вуланӑ-тишкернӗ май ачасен илем туйӑмӗ аталанни, вӗсен илем пахалӑхӗсене ӑша хуни.

**Предметӑн пӗрлӗхлӗ результачӗсем:**

- тӗрлӗ хайлав тишкернӗ май хӑйсен тата ыттисен ӗҫ-хӗлне сӑнама, хаклама хӑнӑхма пуҫлани;
- вуласа е итлесе пӗлнӗ информацие ӑса хывма, асамлама вӗренсе пыни;
- мӑшӑршарӑн, ушкӑнпа пӗрле ӗҫлеме – хӑйсем хушшинче рольсемпе ӗҫсене уйӑрма, пӗрлӗхлӗ ӗҫӗн  харкам пайне пурнӑҫлама вӗренме пуҫлани.

**Предметӑн пайрам результачӗсем:**

- вулав пахалӑхӗсем ҫирӗпленни, вулав тӗсӗсемпе мелӗсене алла илсе пыни;
- сасӑллӑ пуплевӗн пӗлтерӗшлӗ мелӗсене (хӑвӑртлӑхӗ, янаравлӑхӗ, кевелехе) кирле пек улаштарма веренни;
- текст тишкеревне малалла веренсе пыни;
- ансат жанрсене (юмах, калав, сава) пер-перинчен уйарса илме пултарни;
- хаш-пер илемлех мелесене (танлаштару эпитет, метафора) курма-санама тытанни;
- литература пелевен ансат анлавесемпе паллашни.

***3 класран вӗренсе тухнӑ тӗле кӗтекен результатсем***

**Харкамлӑх результачӗсем:**

- тӑван халӑхӑн авалхи кун-ҫулӗпе: унӑн тӗрлӗ тапхӑрта палӑртнӑ ывӑл-хӗрӗпе: вӗсен пархатарлӑ ӗҫӗсемпе паллашнӑ май харкам мӗнле халӑхран тухнине ӑша хуни,  ҫакӑнпа мӑнаҫланас туйӑм ҫирӗпленни;
- тӑван халӑх культурин,  халӑх сӑмахлӑхӗн тытӑмӗпе ӑшлӑхӗ мӗн тери пуян пулнине курма, несӗлӗмӗрсем ӑна ӗмӗрсем хушши упраса, туптаса паянхи куна ҫитерме пултарнине ӑша хывса пыни

**Предметӑн пӗрлӗхлӗ результачӗсем:**

- словарьсемпе,  справочниксемпе усӑ курма вӗренсе пыни;
- кӗнекепе ирӗклӗн ӗҫлеме пӗлни:  уйрӑм палӑртусемпе, тупмаллисемпе усӑ курса кирлӗ текста, унти палӑртнӑ вырӑнӗсене хӑвӑрт тупса сӗннӗ ӗҫӗсене пурнӑҫлани;
- тӗрлӗ информаци ҫӑл куҫӗпе усӑ курма пултарни;
- кӗнекепе: словарьсемпе, справочниксемпе, текст патне панӑ иллюстрацисемпе ӗҫлеме хӑнӑхса пыни;
- вулавӑн тӗрлӗ тӗсне (паллашуллӑ, тӗпчевлӗ-тишкеруллӗ, суйлавлӑ,шыравлӑ) алла илсе пыни;
- мӑшӑррӑн, пӗчӗк ушкӑнпа пӗрле ӗҫлеме - хӑйсем хушшинче рольсемпе ӗҫсене уйӑрма, пӗрлӗхлӗ ӗҫӗн харкам пайне пурнӑҫлама  вӗренсе пыни.

**Предметӑн пайрам результачӗсем:**

- текстпа ӗҫлеме пултарни: темипе тӗп шухӑшне палӑртни: тишкеру ыйтӑвӗпе ҫыхӑннӑ информаци тупни;
- пӗтӗмлетусем патне пыма, пулӑмсемпе сӑнарсен хӑтланӑшӗсен ҫыхӑнӑвӗсене ӑнланма, сӑлтавлама вӗренсе пыни;
- текстра геройсен шухӑшне ҫирӗплетекен вырӑнсене тупма пултарни;
- сӑнарсен ӗҫӗ- хӗлӗпе хӑтланӑшӗсене, кӑмӑл-туйӑмне тишкернӗ-сӑнанӑ май пӗтӗм этемлӗх ырлӑхӗсемпе пахалӑхӗсене ӑша хума, ырӑпа усала уяс хӑнӑхусем аталанса пыни;

- илемлĕ литература жанрĕсен (тĕрлĕ юмах, калав, сăвă, юптару) т.п уйрăмлăхĕсене курма вĕренсе пыни.

*4- класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлах результачесем:**

- вулав харкам аталанăвĕшĕн мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланни;
- тĕнче литература пулминче чăваш литературин тупи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкарни;
- этемлĕх çырулăхĕн пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;
- ачасен вулав пултарулăхĕ çирĕпленнипе пĕрлех хайлавçă пултарулăхĕ те амаланса пыни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- пĕр ыйтупах тĕрлĕ позици пулма пултарнине ăнланни, вĕсенчен пĕрне суйласа илме е хăйĕн урăхла шухăшне каласа пама вĕренни;
- литература вулавĕн предмечĕ шалашĕнче проектсем пурнăçланă май вĕрену задачисем лартма, вĕсене татса памалли çул-йĕр палăртма вĕренсе пыни;
- илемлĕ литература тăван халăх культурин пĕлтерĕшлĕ пайрамĕ пулнине ăса хуни, илемлĕ литература хайлавĕсене унер единици пек йышăнма вĕренсе çитни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- фольклор хайлавне автор хайлавĕнчен уйăрса илме: проза жанрĕсене (калав: юмах: повесть) уйăрма, тĕп паллисене палăртма пĕлни;
- текстра илемлĕ сăнарлăх мелĕсене ( сăпатлантару: танлаштару: эпитет, тепĕр хут калани , сасă çырăвĕ) тупма пĕлни;
- хайлав ăшлăхне пĕр тĕвĕре ( ĕç пуçламăшĕ - ĕç аталанăвĕ – чи çивĕч самант – ĕç вĕçĕ) курма пултарни;
- героя унăн хăтланăвĕ тата текстра тӳррĕн панă характеристики тăрăх хак пама, геройсене хак пани тăрăх автор вĕсене мĕнле куçпа пăхнине чухлама пултарни;
- литература хайлавĕ çинчен ансаттăн каласа пама ( вăл халăхăн е автор хайлавĕ, унăн тĕсĕ (проза, поэзии, драма), сюжетри тĕп йĕрсем, унăн тĕп шухăшĕ) пĕлни;
- авторпа, унăн пултарулăхĕпе кĕскен паллаштарма (поэт е писатель, хăш вăхăтра пурăннă, ытларах мĕн çинчен çырать ( çырнă) каласа пама пултарни;
- авторăн тата харпăр хăйĕн кăмăлне палăртса литература хайлавĕн персонажĕсене хак пама пĕлни;

## 2. Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)

**Пуплев ĕçĕн тĕсĕсем**

**Итлесси.** ачасем вĕрентекен хушăвĕсемпе кĕске пĕлтерĕвĕсене тата юлташĕсем каланисене итлесе ăнланасси.

Текст содержанине туллин ăнланса илмелли пĕлӳсене тата хăнăхусене аталантарасси.

Текстăн тĕп содержанине ăса хывса ăнланмалли пĕлӳсемпе хăнăхусене аталантарасси.

**Калаçасси.** Çанталăк çинчен каласа парасси (халĕ мĕнле çанталăк: ăшă е сивĕ, çумăр, юр çăвать е уяр, хĕвел пăхать т. ыт. те), çулталăк вăхăчĕсем (пĕр-пĕр вăхăтра çутçанталăкăн мĕнле пулăмĕсем палăраççĕ: çумăр, юр; ачасем çулталăкăн ку е вăл вăхăтĕнче мĕн-мĕн тăваççĕ).
Пĕр класра вĕренекен ача çинчен каласа парасси: вăл миçере, унăн сăнĕ-пичĕ, тумтирĕ, вăл мĕн тума юратать. Юратнă уяв (мĕнле уяв вăл, хăçан килет, ăна мĕнле паллă тăваççĕ), юратнă апат-çимĕç.

Кĕске калавсем хăйласси: çулла ăçта пулни, унта мĕн курни çинчен, мĕн-мĕн ĕçлени, сывлăха епле çирĕплетни çинчен. Шкул çинчен, кружоксем çинчен, юратнă учительсем, вĕренӳ, расписани çинчен (хăш-хăш кун мĕнле предметсем пулаççĕ). Мĕн тума юратни çинчен, килти юратнă чĕр чун çинчен (мĕн ятлă, миçере, кăмăлĕ, кĕлетки мĕнле, унăн тĕсĕ, мĕн-мĕн çитеретĕн ăна). Зоопаркра курнă пĕр-пĕр чĕр чун çинчен.

Юлташа (пĕр класра вĕренекене) ăçта та пулин каймашкăн чĕнме, сĕннипе килĕшме е хирĕçлеме хăнăхасси. Юлташран ерçÿллĕ вăхăтра мĕн-мĕн туни, мĕн тума кăмăллани, ÿссен кам пулма ĕмĕтленни çинчен ыйтса пĕлесси. Çуллахи кану, юратнă уяв (ăна епле ирттерни) çинчен калаçасси. Пĕр- пĕрне, пĕлĕшсене, хурăнташ-тăвансене саламлама, ырă сунма, саламланине хуравлама хăнăхасси.

Вуланă текст тăрăх ыйтусем парасси, унăн содержанийĕпе килĕшÿллĕн калаçма хутшăнасси.

Сĕннĕ йĕрке тăрăх текст содержанине каласа парасси, ыйтуллă предложенисенчен, тĕп сăмахсенчен тата çирĕплетÿ пуплевĕнчен тăракан план хатĕрлесси.

Вуланине тата курни-илтнине сÿтсе явмалли пĕлÿсемпе хăнăхусене аталантарасси.

Текст содержанине сăмахпа уçса парасси

Текста улăштармалли пĕлÿсемпе хăнăхтарусене йĕркелесси.

Панă тĕслĕхсем тăрăх диалогсем йĕркелесси.

Диалогсем тăрăх инсценировкăсем хатĕрлесси.

ÿкерчĕк тăрăх пурте пĕрле, пĕчĕк ушкăнпа е уйрăмшарăн калав хатĕрлесси.

**Вуласси.** Сасăпа вулас ăсталăха ÿстересси. Ăсра вуламалли хăнăхăва аталантарасси.

Сăмах вĕççĕн ăса хывнă сăмахсене тата сăмах çаврăнăшĕсене вуласа ăнланасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие суйласа илесси, кирлĕ май страница вĕççĕнчи асăрхаттарусемпе, словарьсемпе усă курасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие ăса илесси, унпа харпăр хăй пуплевĕнче усă курасси, çавăн пекех, чĕлхе материалне сăнаса, сăмахсене мĕнле каланине тата çырнине, сăмах пулăвĕн çыхăнăвĕсене, сăмах улшăнăвĕн сăлтавĕсене палăртасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуланă май вĕсен пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне ăнланса илесси.

Темиçе палламан сăмахлă вĕренÿ тексчĕсене ăсра вуласси, вĕсен содержанине туллин тĕрĕс ăнланса илесси, текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрасси.

Текстсене ят парасси.

Кирлĕ мар информацие сирсе хăварса, текстсене кĕскетесси.

Текст содержанине ыйтусем тăрăх, планпа килĕшÿллĕн, тĕп сăмахсемпе пуплерĕшсем тăрăх каласа парасси, çавна май глаголсен сăпат тата вăхăт формисене улăштарасси.

Тÿрĕ пуплевлĕ текстсене вуласси.

Сăвăсене илемлĕн вуласси, вĕсене пăхмасăр калама вĕренесси. Диалогсене кирлĕ интонаципе вуласси.

**Текстпа ĕçлесси**

Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстăн тĕп шухăшне харпăр хăй тĕллĕн палăртасси, унăн пайĕсем шухăш енĕпе мĕнле çыхăнса тăнине асăрхасси, текстăн планне тăвасси. Мĕн вуланине харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса туллин, кĕскен, суйлавлăн аса илсе каласси. Пĕр-пĕр темăпа калав тумалли материала текстра тупса палăртасси.

Хайлаври ĕçсене тĕрĕс, йĕркипе аса илесси. Сăнлавлă, уйлалă элементсемпе диалог кĕртнĕ теста аса илсе каласси, тÿрĕ пуплеве тÿрĕ мар пуплевпе улăштарасси.

Сăнарсен пуплев уйрăмлăхĕсене сăнасси, вĕсен ĕçĕсене, кăмăл-туйăмне танлаштарасси. Сăнарсем мĕншĕн, мĕн пирки çапла тунине каласси. Хăйсем тата автор çав пулăмсемпе сăнарсене мĕнле хакланине палăртасси.

Калаври, сăвăри, юмахри сăмахсен пĕлрерĕш уйрăмлăхĕ-сĕмĕсене ăнкарасси, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Пулăма, çут çанталăка, çынна витĕмлĕ сăнлакан сăмахсене, вĕсен майлашăвĕсене хайлавра тупасси, вĕсене ăнланасси.

Сăнар ячĕпе е унăн ятне, калавçăн сăпатне улăштарса каласа парасси; калава малалла тăсасси, сăнарăн малашнехи пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен хушса каласси; сăнлавпа уйлав элеменчĕсем кĕртсе пулни-иртни, курни- илтни çинчен калав тăвасси. Халăх сăмахлăхĕ, калав сăвă, юптару çинчен I-IV классенче илнĕ пĕлĕве çирĕплетсе пĕтĕмлетесси.

Илемлĕ литература стилĕпе ăслăлăх стилĕн уйрăмлăхĕсене асăрхама хăнăхтарасси.

Ачасен сăмах йышне куллен пуянлатса çĕнетесси.Вĕсен пуплевĕн пахалăхне лайăхлатасси. Калаçура та, вуланă чух та шухăш- туйăма интонаци мелĕсемпе тĕрĕс палăртасси.
**Вĕрунӳ кĕнекине чухласси:** тупмаллине, пулăшу тата меслет аппарачĕпе усă курасси.Кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлесси.

**КЛАСС ТУЛАШĔНЧИ ВУЛАВ**

**Вулав материалĕ:**Кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кĕнекисем. «Тетте» журналпа, «Тантăш» хаçатри материалсем.
**Вулав тематики.** Аваллăх çинчен. Ырă пурнăçа ĕмĕтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи ĕçĕсем. Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ. Чăваш, вырăс тата ытти тăванла
халăхсен юмахĕсем. Тăван халăх историйĕпе унăн ывăл-хĕрĕ, ал ĕç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кĕнекесем. Нукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепĕр курса çӳрени çинчен калакан статьясем.
**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси.** Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене харпăр хăй тĕллĕн суйласа вулама, тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе, хаçат-журналпа усă курма пĕлесси.
Вĕрентӳçĕ сĕннĕ е харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса мĕн вуланине кĕскен каласа парасси, вуланă сăнар çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Вулама сĕннĕ темăпах 3-5 кĕнеке таран пĕлесси. Пулăшу кĕкнекисемпе усă курасси.
«Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнала тĕллевлĕн вуласси, вĕсемпе урокра тата класс тулашĕнче
усă куоасси.
Кĕнеке мĕн çинченнине унăн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ӳкерчĕкĕсем, ум сăмахĕпе юлашкинчен калани тăрăх ăнкарасси. Кирлĕ кĕнекен е хаçат-журналти статьян ятне, унăн авторне кăтартса тĕрĕс çырса илесси. Кăмăла каякан кĕнекене харпăр хăй тĕллĕнех библиотекăран илсе вуласси.

## 3. Тематика планĕ

### 1 класс (33 сех)

| Раздел теми, сехет шучĕ | № п/п | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|---|
| Шкула каяр-ха вĕренме. (2 сех.) | 1. | Эпĕ халĕ шкул ачи. Илемлĕ сăмахлăх тĕнчине çитме пулăшакан предмет – литература вулавĕ. (3-4 стр.) | 1 |
| | 2. | Хайлав. Илемлĕ хайлав. (4-7 стр.) | 1 |
| Халăх сăмахлăхĕ. (4 сех.) | 3 | Халăх сăмахлăхĕ (сăвви-юрри) (9-10 стр.) | 1 |
| | 4. | Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри. (10-11 стр.) | 1 |
| | 5. | Шутлав сăввисем. (12-13 стр.) | 1 |
| | 6. | Хăвăрткаларăшсем. Тупмалли юмахсем. (13-14стр.) | 1 |
| Юмах юпа тăрринче (1 сех) | 7. | Юмахсем. «Пукане юмахĕ», «Упапа хĕр ача». | 1 |
| Вăйă вылятпăр. (2 сех.) | 8. | Сăвăласа çырнă хайлавсем. (25-28 стр.) | 1 |
| | 9. | Çыравçă хайланă юмах. В.Сутеев «Шăшипе кăранташ» юмахĕ. | 1 |
| Теттесем. (1 сех.) | 10. | Шӳтлĕ сăвăсем. П.Çăлкуç «Ăмсанса пăхать Кампур»(31 с.), М.Волков «Пăрçа хуралçисем»(41-42), Н.Карай «Пулăра» (43 с.) | 1 |
| Ачасем çинчен. (2 сех.) | 11. | Прозăпа çырнă хайлавсем.«Калав»ăнлав.( Н.Ишентей «Хуплу пĕçерни», П. Яккусен «Анне», И.Микулайĕ «Арбуз» суйласа ил) | 1 |
| | 12. | Калавра мĕн çинчен калани. Калав ячĕ. Л.Сарине «Арман авăртать» | 1 |
| Чĕр чунсем çинчен. (3 сех.) | 13. | Юптару. П.Çăлкуç «Хур аçи», Ю.Мишши «Лашапа кашкăр». | 1 |
| | 14. | О.Печников «Усала вĕрентнĕ путек», Е.Чарушин «Томка тĕлĕкĕсем». | 1 |
| | 15. | В.Сутеев «Кăмпа айĕнче». | 1 |
| Тавралăх – асамлă тĕнче. (1 сех.) | 16. | А.Пăртта «Çумăр ташши», А.Ыхра «Пукан», Л.Сарине «Вăрманта». | 1 |
| Килсе çитрĕ хаваслă хĕл. ( 3 сех.) | 17. | В.Эктел «Юр», П.Çăлкуç «Ытарми хĕл», Л.Смолина «Тăвайкки». | 1 |
| | 18 | В.Эктел «Хĕл Мучи», П.Çăлкуç «Тăвайкки», Е.Кузнец «Çеменпе Сивĕ Мучи». | 1 |
| | 19. | Л.Салампи «Юр пĕрчи», «Икĕ шартлама». | 1 |
| Ача – пăча сăмахлăхĕ (3 сех.) | 20. | Кулленхи сăвă-юрă. (стр.15-17) | 1 |
| | 21. | Чĕнӳ-йыхрав сăвви-юрри, хăвăрт сăмах, тупмалли юмахсем. | 1 |
| | 22. | Пулмасла халап. Вĕççĕр такмак. Шӳт. | 1 |
| Юмах ятăм, юптартăм. (1 сех.) | 23. | Улăп халапĕсем. «Тилĕпе Качака таки». | 1 |
| Пирĕн вăйă-кулă (1 сех.) | 24. | Л.Сорокина «Пукане», Ю.Силэм «Шак-шак-шак», Р.Сарпи « Ташлать Илемпи». | 1 |
| Ачасем çинчен ( 4 сех.) | 25 | Н.Ыдарай «Чăваш ачи», Ордем Гали «Пысăк ĕç». | 1 |
| | 26. | В.Голявкин «Инкек»,7Р.Сарпи.«ӳкерчĕк» | 1 |
| | 27. | А.Ыхра калавĕсем, Н.Карай «Макăрмарĕ». | 1 |
| | 28. | М.Салихов «Усăллă кану», В Осеева «Ырă ĕç», Н.Рогачёв «Пулăççем». | 1 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Чĕр чунсем çинчен (3 сехет) | 29. | И.Яковлев «Хураçка», А.Ыхра«Шурка»,Е.Чарушин «Томка ишме вĕренни». | 1 |
| | 30. | К.Чуковский «Чĕрĕп кулать», Э.Шим «Шапапа калта», «Пакшапа пăрăнтăк». | 1 |
| | 31. | Ю.Петров «Путене», И.Малкай « Тăри», С.Асамат «Йăва», О. Печников «Чĕр чунсем те çынсем пекех». | 1 |
| Тавралăх – асамлă тĕнче (2сех.) | 32. | С.Соколинский «Çумăр», П.Çăлкуç «Çумăр умĕн». | 1 |
| | 33. | Х.Çеменĕ «Çуркунне». В.Тарават «Кăнтăр çĕршывĕнче», А. Ыхра «Çурхи илем». | 1 |

## 2 класс (102 сех)

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | ***1-мĕш чĕрĕк*** | |
| | **Шкула (2 сех.)** | |
| 1 | А. Алка «Чи савăнăçлă кун», «Хутла вĕренме тытăнакана» | 1 |
| 2 | И. Шухши «Чернил» | 1 |
| | **Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв (6 сех.)** | |
| 3 | П. Хусанкай «Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ» М. Юхма «Чăваш çĕршывĕ» | 1 |
| 4 | Ялав | 1 |
| 5 | П. Хусанкай «Çĕршывăмăр пуçламăшĕ» | 1 |
| 6 | КТВ «Çулла вуланă чи интереслĕ кĕнекесем» | 1 |
| 7 | С. Тăваньялсем «Тăван чĕлхене ан манăр», Л. Мартьянова «Чăвашла» | 1 |
| 8 | А. Трофимов «Асатте-асаннесен çырулăхĕ», П. Хусанкай «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» | 1 |
| | **Кĕркунне (8 сех.)** | |
| 9 | П. Эйзин «Сывă пул, çу кунĕ», В. Ямаш «Кĕр ирĕ» | 1 |
| 10 | М. Трубина «Кĕр çитрĕ» | 1 |
| 11 | Н. Сладков «Ылтăн çумăр», Н. Теветкел «Симĕс хуралçă» | 1 |
| 12 | КТВ «Ылтăн тумлă кĕркунне» | 1 |
| 13 | Г. Харлампьев «Эсир пакша курнă-и?» | 1 |
| 14 | С. Сарпай «Хура кĕркунне», В. Аптраман «Кĕркунне» | 1 |
| 15 | М. Илпек «Тăрнасем»,<br>К. Иванов «Кĕркунне» | 1 |
| 16 | Хĕл ларас умĕн | 1 |
| | **Эпир – туслă та хаваслă ачасем(11 сех.)** | |
| 17 | П. Хусанкай «Шкул ачи» | 1 |
| 18 | КТВ «Сăпайлă, ырă кăмăллă пулма мĕн пĕчĕкрен вĕрен» | 1 |
| 19 | С. Иванов «Сапăрлăх çинчен», А. Кăлкан «Чăрсăр автансем» | 1 |
| 20 | В. Осеева «Алюшпа Кĕтерук» | 1 |
| 21 | К. Чуковский «Лапăрчăк» | 1 |
| 22 | И. Шухши «Сылтăм алăпа сулахай алă» | 1 |
| 23 | О. Савандеева «Микула пичче кучченеçĕ» | 1 |
| 24 | КТВ «Ырă ĕçсем пурнăçа илем кÿреççĕ» | 1 |
| 25 | А. Барто «Вăт епле вăл пулăшать» | 1 |
| 26 | Е. Афанасьев «Кенттипе Мишша» | 1 |
| 27 | И. Малкай «Çÿпçе» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| ***2-мĕш чĕрĕк*** | | |
| **Хĕл (9 сех.)** | | |
| 28 | А.Алка «Юр çунă», Н. Шелепи «Юр» | 1 |
| 29 | А. Алка «Çĕнĕ çул юрри» | 1 |
| 30 | КТВ «Эпир туслă ачасем» | 1 |
| 31 | Н. Матвеев «Раштав уйăхĕ», Хумма Çеменĕ «Хĕллехи вăрман» | 1 |
| 32 | А. Пушкин «Хĕллехи каç» | 1 |
| 33 | Г. Луч «Кукăр сăмса» | 1 |
| 34 | Н. Сладков «Хĕл каçни» | 1 |
| 35 | В. Эктел «Юр пике» | 1 |
| 36 | КТВ «Хĕл каçакан вĕçен кайăксем» | 1 |
| **Халăх сăмахлăхĕнчен (8 сех.)** | | |
| 37 | Тупмалли юмахсем. | 1 |
| 38 | Пулмасла халапсем К. Чуковский «Савăнăç» | 1 |
| 39 | Сурхури юрри. | 1 |
| 40 | Çăварни юрри. Хумма Çеменĕ «Çăварни чупни» | 1 |
| 41 | Н. Ыдарай «Чĕрĕп» | 1 |
| 42 | КТВ «Пирĕн йăла-йĕрке» | 1 |
| 43 | Кĕт-кĕтесле. Кĕтес улăштарма хушмалли такмак. | 1 |
| 44 | Улăпсем. Асамат кĕперĕ | 1 |
| **Юмахсем (11 сех.)** | | |
| 45 | Кинемей, мăнукĕ тата чăпар чăх. | 1 |
| 46 | Çăткăн упа çурисем. | 1 |
| 47 | Шиклĕ шăши. | 1 |
| 48 | КТВ «Юмах тĕнчинче» | 1 |
| ***3-мĕш чĕрĕк*** | | |
| 49 | Çилпе Хĕвел. | 1 |
| 50 | Тетте-юмах. | 1 |
| 51 | Сарă аист. | 1 |
| 52 | *Н. Карнай «Çырлана кайсан»* | *1* |
| 53 | *Ю. Ярмаш «Кӳлĕ»* | *1* |
| 54 | КТВ «Пирĕн вăйă карти» | 1 |
| 55 | А. Толстой «Пуртă» | 1 |
| **Тăван кил-йышра (3 сех.)** | | |
| 56 | В. Давыдов-Анатри «Юратнă анне», Б. Данилов «Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне?» | 1 |
| 57 | В. Сухомлинский «Ан кӳренсем, атте!» | 1 |
| 58 | В. Сухомлинский «Амăшĕ мĕншĕн макăрнă?» | 1 |
| **Ĕç телей те савăнăç кӳрет (9 сех.** | | |
| 59 | И. Яковлев «Эпĕ сехет çĕмĕрни», И. Яковлев «Кулачă» | 1 |
| 60 | КТВ «Манăн анне – чи хитри» | 1 |
| 61 | Н. Иванов «Мухтанчăк Çерçи» | 1 |
| 62 | И. Шухши «Куршанак çыпăçрĕ», В. Тимаков «Пыл хурчĕ» | 1 |
| 63 | К. Иванов «Ĕçчен Нарспи» | 1 |
| 64 | Н. Иванов «Пахча хуралçи» | 1 |
| 65 | А. Кăлкан «Кĕтӳç» | 1 |
| 66 | КТВ «Паттăр та хăюллă çынсем çинчен» | 1 |
| 67 | Петĕр Яккусен «Кăткă Арăсланĕ» | 1 |
| **Килчĕ ырă çуркунне (8 сех.)** | | |
| 68 | Калина Малина «Тумла», Н. Матвеев «Пуш уйăхĕнче» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 69 | Çуркунне çитрĕ. К. Иванов «Çуркунне çитсен» | 1 |
| 70 | Н. Шелепи «Пăр каять» | 1 |
| 71 | Н. Сладков «Упа йĕнни», А. Николаев «Çурхи сасă» | 1 |
| 72 | КТВ «Çуркунне ал парать таврана» | 1 |
| 73 | М. Козлов «Çур çеçкисем» | 1 |
| 74 | Н. Мартынов «Çуркунне» | 1 |
| 75 | А. Игнатьев «Пĕрремĕш аслати», А. Алка «Малтанхи аслати» (207) | 1 |
| **Чĕр чунсем – пирĕн туссем (13 сех.)** | | |
| 76 | М. Пришвин «Тискер кайăксем», М. Волкова «Пăши пăрушĕ» | 1 |
| 77 | Г. Луч «Ай, пакша!» | 1 |
| ***4-мĕш чĕрĕк*** | | |
| 78 | КТВ «Мух-тавлă ентешĕ-мĕр Андриян Николаев» | 1 |
| 79 | Хв. Уяр «Пурăш» | 1 |
| 80 | А. Хум «Кăткăсем», Р. Сарпи «Улай» | 1 |
| 81 | Г. Луч «Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ?» | 1 |
| 82 | Г. Харлампьев «Юрă ăстисем» | 1 |
| 83 | М. Стельмах «Текерлĕк», М. Пришвин «Çăмăлттай» | 1 |
| 84 | КТВ «Чĕрчунсем – пирĕн туссем» | 1 |
| 85 | К. Чуковский «Чăх чĕппи», П. Эревет «Сар автан» | 1 |
| 86 | В. Сухомлинский «Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ» | 1 |
| 87 | Г. Харлампьев «Çырла пиçсен» | 1 |
| 88 | Б. Заходер «Мулкач çури» | 1 |
| **Ӳсен-тăран тĕнчи (8 сех)** | | |
| 89 | Н. Матвеев «Пĕр йăхри йывăçсем» | 1 |
| 90 | КТВ «Пирĕн таврари ӳсен-тăрансем» | 1 |
| 91 | Ç. Элкер «Юман» | 1 |
| 92 | Г. Орлов «Вăрманăн пĕрремĕш кучченеçĕ» | 1 |
| 93 | Р. Сарпи «Кӳлĕ», Н. Сладков «Пулă тăвăнни» | 1 |
| 94 | Г. Харлампьев «Çумăр» | 1 |
| 95 | Н. Шупуççынни «Каç пулчĕ» | 1 |
| 96 | КТВ «Тĕлĕнмелли, пĕлмелли – кашни утăмрах» | 1 |
| **Çу уйăхне кĕтĕмĕр (6 сех.)** | | |
| 97 | С. Асамат «Çумăр ташши», И. Гончаров «Аслатиллĕ çумăр умĕн» | 1 |
| 98 | Ç. Элкер «Çуллахи ир» | 1 |
| 99 | Ю. Силэм «Утă çинче вăрманта», А. Костецкий «Утăра» | 1 |
| 100 | Г. Тал-Мăрса «Хирте» | 1 |
| 101 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 |
| 102 | КТВ «Манăн юратнă кĕнеке» | 1 |

## 3 класс (102 сех) Сехет шучĕ

| Урокăн № | Урокăн теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| ***1* – м.ш ч.р.к I Ак =итр. сентябрь (7 сехет)** | | |
| 1 | Г?Волков «+амрёкла в.ренни – чул =инче?» | 1 |
| 2 | Г? Сапгир «В.ренн. лаша» | 1 |
| 3 - 4 | Хв? Уяр«Мёйёр хуппи» | 2 |
| 5 -6 | К?Беляев Чи хаклё парне | 2 |

| | | |
|---|---|---|
| 7 | **Класс тулаш.нчи вулав №1*«+ут т.нче асамлё та пуян»( 4 -9 стр)*** | 1 |
| **II? Чёваш =.ршыв. (8 сехет)** | | |
| 8 | К? Ушинский «Тёван =.ршыв - пир.н анне» | 1 |
| 9 | Чёваш республикин патшалёх гимн. | 1 |
| 10 - 11 | Х? Кашкёр«Ылтён =.р» | 2 |
| 12 - 13 | Н?Янкас «Лёпкё =.ршывра» | 2 |
| 14 | **Класс тулаш.нчи вулав? №2 «*+ырла кукли» (21 -25 стр)*** | 1 |
| 15 | С? Вишневский «Туслах самах.» | 1 |
| **III? К.ркунне (6 сехет)** | | |
| 16 | Н?Теветкел «К.рхи сёнсем»Н Исмуков «К.р пасар.» | 1 |
| 17 - 18 | И? Соколов- Микитов «К.рхи вёрманта»М Волкова «К.рхи хурён» | 2 |
| 19 - 20 | О?Туркай «+ул=ё»Н Янкас «Сив.тет санталак» | 2 |
| 21 | **Класс тулаш.нчи вулав? №3 *« Ёслё ача»(27 -31 стр)?*** | 1 |
| **IV? Халёх сёмахлёх. (9 сехет)** | | |
| 22 - 23 | Тупмалли юмахсем? Вёйё юррисем | 2 |
| 24 - 25 | Хёш-п.р хускану вёййи –й.рки «Уйёхпа х.велле» «Ак телей!» | 2 |
| 26 - 27 | 1)К?Чулкас? «Ёсансене ертсе килни» 2)Юптарусем «Ула куракпа тил.» Эзоп « Ула куракпа Тил.» И? Крылов | 2 |
| 28 - 29 | «Пакшапа кашкёр»Юптару«Тил. Туспа кашкёр тус» | 2 |
| 30 | **Класс тулаш.нчи вулав? №4«Атьăр вăййа тухар- и, тĕрлĕ вăйă выляр-и» (157 -163 стр)** | 1 |
| **V? Улёп йёхёнчен эпир: туссем (4 сехет)** | | |
| 31 | Г Юмарт «Улёпсем» | 1 |
| **2 – м.ш ч.р.к** | | |
| 32 | Библирен? Ной карап. | 1 |
| 33 | «Ту =инчен аннё Улёп» | 1 |
| 34 | «+унатлё урхамах» | 1 |
| **VI? Юмах юпа тёрринче (7 сехет)** | | |
| 35 - 36 | «Чее такасем?» (чёваш халёх юмах.) | 2 |
| 37 | **К?Т?В? №5Юмах ен çĕршывĕ (113 -118 стр)** | 1 |
| 38 - 39 | «Курай юмах»(Пушкёрт халёх юмах.?) | 2 |
| 40 | «Пакшапа мёйёр?» (Удмурт халёх юмах.?) | 1 |
| 41 | **К?Т?В? №6 „Лайăх тени мĕн тени, япăх тени мĕн тени” (32 – 38 стр)** | 1 |
| **VII? Асам=ё х.л (7 сехет)** | | |

| | | |
|---|---|---|
| 42 | В? Эткел?« Х.л пусламёш.»: А? Пушки «Х.лле» | 1 |
| 43 | Н?Сладков? «Х.ллехи =у кун.сем» | 1 |
| 44 | «Хырпа Чараш тата Урташ м.нш.н яланах сим.с» (Чёваш халёх юмах.) | 1 |
| 45 | В?Харитонов «Й.лт.рпе:»А? Смолин «Халах хайлав. майлё» | 1 |
| 46 | Г? Харлампьев «Мулкач й.р.пе» | 1 |
| 47 | **КТВ №7*„Çут тĕнче асамлă та пуян”(10 – 19 стр)*** | 1 |
| 48 | Н? Силпи «Намёсланакан =.нтер\=.»«Малтанхи юр» | 1 |
| **VIII? Эпир сёпайлё ачасем (14 сехет)** | | |
| 49 | Н?Карай «Йёмёк» | 1 |
| 50 | М? Джалиль «Сываракан ача»: Р?Мина туллин«Пулёшакан» | 1 |
| **3 – м.ш ч.р.к** | | |
| 51 | А? Галкин «Шёна кёмпин шёпи» | 1 |
| 52 | Н? Иванов «Чечек =ыххи» | 1 |
| 53 | **К?Т?В? №8«*Тантёш» - ачасен =ывёх тус.»*** | 1 |
| 54 | И?Шухши «К.рен т\пе» | 1 |
| 55 | 1)Г?Волков «Пуянлёх хакне .=лекен =е= п.лет» | 1 |
| 56 | Л?Ковалюк «Хёрав=ё» | 1 |
| 57 | **К?Т?В? №9 „Лайăх тени мĕн тени, япăх тени мĕн тени” (39 -48 стр)** | 1 |
| 58 | А?Еруcланов «Хапха=ё» | 1 |
| 59 | О?Уайльд « Хёйне =е= юратакан Улăп» | 1 |
| 60 | Исмай Исемпек «Шёвё= витре» | 1 |
| 61 | Вячеслав Ар – Серги «Асанне шкул.» | 1 |
| 62 | **К?Т?В? №10„Пирĕн пĕчĕк театр” (72 - 83 стр)** | 1 |
| **IX? +ур хаваслёх. (9 сехет)** | | |
| 63 | Н?Исмуков «+урхи т.нче»:Л?Смолина «+уркунне пу=ланать» | 1 |
| 64 | Н? Некрасов «Еш.л шав»: Уйап Мишши «+урхи вёйё» | 1 |
| 65 | М.три Кипек «+урхи вёрманта» А Каттай «+е=п.л» | 1 |
| 66 | Г? Снегирев «Малтанхи х.вел» | 1 |
| 67 | **К?Т?В? №11*«Кайёксем – пир.н туссем»*** | 1 |
| 68 | Н?Соколов-Микитов «Вёрманта» | 1 |
| 69 | К?Иванов +уркунне =итсен | 1 |
| 70 | Н? Матвеев «Таврана илем к\ре==.» | 1 |
| 71 | А?Артемьев «+урхи кун» | 1 |
| **Х?Ч.р чун т.нчи (15 сехет)** | | |
| 72<br>73 | Н?Ишентей «Аптраман кёвакалсем» | 2 |
| 74 | **К?Т?В? №12«Кăвакарчăн” ( 59 -69 стр)** | 1 |
| **4 – м.ш ч.р.к** | | |
| 75<br>76 | С?Элкер«Кашкёрсемпе =апё=ни» | 2 |
| 77 | Н?Иванов«Ёсанпа Хура=кА» | 1 |
| 78<br>79 | Н?Матвеев «Уртёш» | 2 |
| 80 | **К?Т?В? №13 «+уркуннехи уявсем» (145 -149 стр)** | 1 |
| 81 | Н?Матвеев «+ара =ер=и» | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 82<br>83 | Ольга Савандаева «Сёркка» | 2 |
| 84<br>85 | Г?Орлов «Кашкёр тавёрёв.» | 2 |
| 86 | **К?Т?В? №14** ***«Писательсем суркунне синчен»*** | 1 |
| **XII? Ытарайми: асран кайми тёван тавралёх (16 сехет)** | | |
| 87<br>88 | И?Дубанов «Эл к\лли» | 2 |
| 89 | В?Харитонов «+ил ачи» | 1 |
| 90<br>91 | Г?Орлов «+ухату» | 2 |
| 92<br>93 | М?Волкова «+ул=\рев=. вёрёсем» | 2 |
| 94 | **КТВ №15 «Эпир – И?Я?Яковлев мёнукесем»**(библиотекăран илнĕ кĕнеке) | 1 |
| 95 | М?Волкова «П.л.тсем: а=та васкатёр?» | 1 |
| 96<br>97 | Хвет.р Уяр «Тарёхнё така» | 2 |
| 98 | Х? Юлдашев Смолин ку=арнё«Л.п.ш» | 1 |
| 99 | Уйёп Мишши «+уллахи каникул» | 1 |
| 100 | **КТВ №16*«Майён 9 – м.ш. –+.нтер\ уяв.» (150 -155 стр)*** | 1 |
| 101<br>102 | Г?Харлампьев «Кул. х.рринче» | 2 |

## Тематика планĕ 4 класс (34сех)

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| Аван – и, шкул саккийĕ!.. 2 сехет | | |
| 1 | Ю.Петров. Сентябрь ирĕ. Н. Теветкел. Кĕрхи кăмăл. | 1 |
| 2 | Иван Шухши. Павăл, Миккуль тата Петĕр. | 1 |
| Килсе çитрĕ тулăх кĕр. 3 сехет | | |
| 3 | М. Васлейĕ. Кĕрхи илем. В. Харитонов. Кĕрхи вăрманта | 1 |
| 4 | Л. Сильвестров. Кĕркунне макăрать. Г. Ефимов.Тумне хывма ĕлкĕреймен. | 1 |
| 5 | К.Т.В. Çут тĕнче ытамĕнче. Писательсем çут çанталăк çинчен. | 1 |
| Ку вăл – ман Тăван çĕршыв. 4 сехет | | |
| 6 | В. Ахун. Тăван чĕлхе.П. Хусанкай. Эп - чăваш ачи. | 1 |
| 7 | И.Я.Яковлев чăваш халăхне панă Халал. | 1 |
| 8 | И.П. Прокопьев. Ун ятне этемлĕх манмĕ. | 1 |
| 9 | К.Т.В. Савнă ен – Чăваш çĕршывĕ. | 1 |
| Шурă юр çусассăн. 3 сехет | | |
| 10 | Н. Сладков. Пĕрремĕш юр. | 1 |
| 11 | Н. Сладков. Кайăксем ăçта çывăраççĕ. | 1 |
| 12 | К.Т.В. Хĕл асамçă. Писательсем çут çанталăк çинчен. | 1 |
| Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен. 3 сехет | | |
| 13 | Юмахсем. | 1 |
| 14 | Халапсем. | 1 |
| 15 | Халăх юррисем. Сюжетлă вăййсем. | 1 |
| Кусем – манăн туссем. 4 сехет | | |
| 16 | Иван Шухши. Çил çуна. | 1 |
| 17 | А. Галкин. Математика мыскари. | 1 |
| 18 | В.Дмитриев Чаплă парне. (Пьеса) | 1 |
| 19 | К.Т.ВК. Груйя .Пакăлти. | 1 |
| Ырăпа усал. 6 сехет | | |
| 20 | Л. Мартьянова. Чĕлхесĕр Иван. | 1 |
| 21 | П. Можаров. Хăйма вăрри. | 1 |
| 22 | О. Уайльд. Çывăх тус. | 1 |
| 23 | К.Т.В. М.Горький. Эрхип мучипе Ленька. | 1 |
| 24 | Л. Смолина. Сăпка юрри. А. Смолин. Анне – пирĕн тĕнче. | 1 |
| 25 | Ю. Артамонов. Çăкăр. | 1 |
| Ӳсен – тăран тĕнчинче.- 2 сех | | |
| 26 | Юхма Мишши. Курăк академикĕ. | 1 |
| 27 | А. Артемьев. Елюк сăртĕнче. | 1 |
| Çуркунне çитсессĕн…..2 сехет | | |
| 28 | Н. Прокопьев. Çуркунне пуçланать.К. Турхан. Çуркунне. | 1 |
| 29 | КТВ.Çуркунне çинчен писательсем.Н.Матвеев. Çĕр ыйхăран вăранать. | |
| Чĕр чунсем – пирĕн туссем. 2 сехет | | |
| 30 | В. Бианки.Раксем ăçта хĕл каçаççĕ. | 1 |
| 31 | А. Кăлкан. Юптару «Йытăпа кушак» | 1 |
| Вăрçă кĕрленĕ чух. 2 сехет | | |
| 32 | Н. Евстафьев. Амăш пилĕ. Мусса Джалиль. Урасăр. | 1 |
| 33 | А. Клементьев. Эпир çĕнтертĕмĕр. | 1 |
| Çу пуçланчĕ. 1 сехет | | |
| 34 | Çу çитрĕ. Çуллахи вăрманта. | 1 |

# 4. ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВ ĂСЛАЙĔСЕМПЕ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ ТĔРĔСЛЕСЕ ХАКЛАССИ

## 1 класс

1-мĕш çул вĕренекенсен вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене куллен тĕрĕслесе пымалла, сăмах вĕççĕн хакламалла. 1 – мĕш классра сăмахри сыпăксемпе сасăсене уйăрас, вĕреннĕ сас паллисемлĕ сăмахсене, предложенисене, текстсене ăнланса, тĕрĕс, тикĕс. Сыпăкăн-сыпăкăн вулас хăнăхусен аталанăвне асăрхасах тăмалла. Вĕренӳ çулĕ вĕçнелле программăра кăтартнă ăслайсем (текста ăнланса, тĕрĕс те тикĕс, йывăр сăмахсене сыпăкласа , ансатраххисене тулли сăмахăн минутра 20-25 сăмах таран вулас пултарулăх) еплерех щайрине тĕрĕслемелле, сăмахпа каласа хакламалла.

## 2 класс

Вĕренекенсен вулав пахалăхне текстпа мĕнле ĕçленине шута илсе хаклаççĕ.
2 класра **«5» палла çакăи пек чухне лартмалла:** ача текста тĕрĕс вулать пулсан;

1-мĕш çурçулта текста тикĕс, сыпăкăн-сыпăкăн, хăш-пĕр сăмахсене сыпăкламасăр минутра 30 (ăшра 45) сăмахран кая мар вулать.

2-мĕш çурçулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене çеç сыпăкласа), минутра 50 (ăшра 60) сăмахран кая мар, сăмахсене, сасăсене тĕрĕс, пăсмасăр, сыпăксемпе саспаллисене вырăнĕпе ылмаштармасăр, сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс туса, предложенисен вĕçĕнчи чарăну паллисене пăхăнса тивĕçлĕ чарăнусемпе, интонаципе вулать; текстри палламан сăмахсене асăрхама пултарать; юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрма, вулани тата текстри ӳкерчĕксем çинчен йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсем тăрăх текстпа ĕçлеме пĕлет; сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавлама пултарать; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла**: ача вуланă текста ăнланать пулсан;

1-мĕш çурçулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), минутра 25 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа) минутра 40 сăмахран кая мар вулать.

**«3» паллă** çакăн **пек чухне лартмалла:** ача мĕн вуланине вĕрентекен пулăшнипе çеç ăнланса илет пулсан;

1-мĕш çурçулта текста такăна-такăна, сăмахсене вакласа (хăш-пĕр сăмахсене çеç туллин) минутра 25 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта тикĕссĕн, сăмахсене вакласа (хăш-пĕр сăмахсене туллин) минутра 35 сăмахран кая мар вулать, анчах сăмахсемпе сыпăксене 3—4 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарать, сиктерсе хăварать, вырăнĕпе улăштарать, сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тĕрĕс тумасть; мĕн çинчен вуланине каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене вĕрентекен пулăшнипе çеç тӳрлетет; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕпех пĕлмест.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача вĕрентекен ыйтăвĕсем пулăшнипе те текста ăнланаймасть;

1-мĕш çурçулта саспаллисемпе 20 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çурçулта такăна-такăна, сăмахсене сыпăкласа, минутра 30 сăмахран кая мар, сыпăксене, сасăсене 6 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарса, сиктерсе хăварса, ылмаштарса вулать, сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тума пĕлмест; текст ăшлăхне вĕрентекен пулăшнипе те каласа параймасть; сăвă тексчĕн пысăк пайне пăхмасăр калаймасть.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача уйрăм сас-паллин каласа та вулама пĕлмест; пĕчĕк сăвва та пăхмасăр калама вĕренеймест.

**3 класс**

**„5‘ паллă çакăн чухне лартмалла**:ача мĕн вуланине туллин ăнлансан;

1- мĕш çур çулта тулли сăмахăн (пĕрремĕш хут тĕл пулнă сăмахсене сыпăкласа), пĕр тикĕссĕн, тивĕçлĕ интонаципе минутра 65 (ăшра 80) сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта тĕрĕс ăнланса. Пĕр тикĕссĕн. Сăмахсене вакламасăр, текст пĕлтерĕшĕпе шухăшне шута илсе тивĕçлĕ интонаципе(хăвăрт е хуллен, сасса хăпертса е хăпартмасăр, логика пусăмĕпе тăхтавсем туса) минутра 75(ăшра 80] сăмахран кая мар вулать; вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн каласа пама, пысăках мар текст пайĕсене харкам тĕллĕн уйăрса ят пама. Ансăрплан тăрăх каласа пама. Ыйтусене хуравлама, шухăшне текстри тĕслĕхпе çирĕплетме. Хайлавăн тĕп шухăшне ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе палăртма. Текста асăмласа каласа панă чухне сăнарлă сăмахсемпе усă курма пĕлет; автор герой çине мĕнле куçпапăхнине, сăаă. Калав. Юптару, пьеса ансат уйрăмлăхĕсене чухлать; пăхмасăр каласа памалли сăвă текстне çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă каласа парать.

**«4” паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен вуланă текста ăнланать пулсан;

1-мĕш çур çулта текста палăртуллăн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса, йăнăшсене тӳрлетсе пырса, минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ 65 сăмахран кая мар, вулавра 1-2 йăнăш, ача ăна хăех тӳрлетет; сăвва палăртуллăн, тивĕçлĕ интонаципе пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах та пысăках мар йăнăшсем (пĕр сăмахах темиçе хут калани, пăтраштарни ) тăватью

**„3‘ паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен ача текстăн щухăшне вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç ăнланать пулсан:

1-мĕш çур çулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсеневакласа), сасса улăштармасăр минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 60 сăмахран каямар, ача сăмахсене, сыпăксемпе сасăсене 4-6 çĕрте пăтраштарса, сиктерсе хăварса, вĕсене вырăнĕпе ылмаштарса. Сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс мар туса вулать; мĕн çинчен вуланине çыхăнуллăн каласа пама пĕлместь, текст пайĕсене уйăрса ят пама вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç пултарать, пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене пулăшмасăр тӳрлетеймест; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕпех пĕлмест.

„**2» паллă çакăн чухне лартмалла**: вĕренекен ача 1-мĕш çур çулта сасса улăштармасăр. Сăмахсене вакласа. минутра 35 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта хăш пĕр сăмахсене çе вакламасăр минутра 45 сăмах таран вулать; 6 йăнăшран нумайрах тăвать: мĕн вуланине пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, вĕрентекен ыйтăвĕсемпе те текстăн пайĕсене уйăрма пĕлиест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа пама пултараймасть;

**„1“ паллă çакăн пек чухне лартмалла**: ача сăмахсене сыпăкласа та вулаймасть; мĕн вуланине ăнланмаст, каласа параймасть; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлмест.

## 4 класс

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача туллии сăмахсемпе, ăнланса, литература чĕлхин тĕп виçисене пăхăнса, вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса пырса вулать пулсан;

1-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 80 (ăшра 95) сăмахран кая маар;

2-мĕш çурçулта – минутра 95 (ăшра 110) сăмахран кая мар;

ача текста палăртуллă вулама харкам тĕллĕнех хатĕрленме пĕлет; текстăн тĕп шухăшне тивĕçлĕ интонаципе палăртса вулать; мĕн вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн, калавçă сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа пама пултарать, вуланин тĕп шухăшне хăй сăмахĕсемпе каласа парать; текстри сăнарсене, ĕçсене, çут çанталăка сăнласа паракан сăмахсене, сăмах майлашăвăсене тупса пама пĕлет; геройсем пурнăçлакан ĕç-хĕле кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хак пама, калаври ĕçсен йĕркине палăртма, автор çинчен каласа пама пултарать; автор геройсем çине мĕнле куçпа пăхнине, литература терминĕсен (танлаштару, эпитет, метафора, гипербола, метонимии, иронии) пĕлтерĕшĕсене чухлать; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе, логика чарăнăвĕсемпе пусăмĕсем туса каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен ача ăнланса, туллии сăмахăн, пĕлтерĕшпе шухăша тивĕçлĕ интонаципе тĕрĕс вулать пулсан;

1-мĕш çурçулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая маар;

2-мĕш çурçулта – минутра 85 сăмахран кая мар; ача вуланă чухне 1-3 йăнăш тăвать, вуланин тĕп шухăшне хăй тĕллĕнех палăртать, анчах каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене вĕрентÿçĕ пулăшнипе тÿрлетет; текста туллин, кĕскен, суйлавлăн, калавçă сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа панă чухне пысăках маар йăнăшсем тăвать; литература теорийĕн ансат ăнлавĕсене (эпитет, метафора т.ыт.те) пĕтĕмĕшле ăнкарать; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах 1-2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех тÿрлетет.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен ача мĕн вуланине хăй тĕллĕнех ăнланмасть пулсан;

1-мĕш çурçулта сасса улăштармасăр, туллии сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене вакласа) минутра 65 сăмахран кая маар вулать;

2-мĕш çурçулта сăмахсене вакламасăр минутра 80 сăмахран кая маар, 4-6 йăнăш туса вулать; вулани çинчен вĕрентÿçĕ пулăшнипе çеç кĕскен каласа парайрать; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентÿçĕ пулăшнипе çеç тÿрлетет.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача 1-мĕш çурçулта сăмахсене вакласа (хăш-пĕрисене тулли сăмахăн), такăна-такăна, йăнăшсем туса, минутра 60 сăмах таран вулать; 2-мĕш çурçулта та туллии сăмахăн вулаймасть, 6 йăнăшран ытларах тăвать, минутра 70 сăмах таран вулать; ача текста пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, пуплев йăнăшĕсем чылай тăвать, пулăшмасăр план тума, вуланин тĕп шухăшне уçса каласа пама пĕлеймест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа параймасть.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача сăмахсене сыпăкласа вулать, мĕн вуланине ăнланаймасть, сăвва пăхмасăр калама пачах пĕлмест пулсан.

## Класс тулашӗнчи вулав ӑслайӗсемпе хӑнӑхӑвӗсене тӗрӗслесе хакласси

### 1 класс

Ачасен класс тулашӗнчи вулавне паллӑсемпе мар. Сӑмахпа каласа хаклаççӗ. Япӑх каласа хурламалла мар, ачана харкам тӗллӗн кӗнеке вулама хавхалантармалла.

### 2 класс

Паллӑна ача эрнере мӗн чухлӗ вуланине шута илсе лартаççӗ. Вулав норми çакӑн пек: II класра – 1-мӗш çурçулта I,5 – 3 страница, 2-мӗш çурçулта 5 – 10 страница.

**«5» паллӑ çакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен программӑра кӑтартнӑ (кӑтартманнисене те) пӗрмаях вулать, пӗр-пӗр кӗнекене ыттисенчен унӑн тулаш паллисем (ячӗпе автор хушамачӗ) тӑрӑх уйӑрса илет, кӗнеке авторӗн ячӗ тата унти ӳкерчӗксем тӑрӑх мӗн е кам çинчен çырнине ӑнкарать, хайлава хӑй тӗллӗн ӑшра вуласа тухма пултарать, вӗрентӳçӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӗнекери сӑнарсене асӑнса тухма тата вӗсене сӑнлама пӗлет, класра халь сеç е маларах вуланӑ кӗнекесенчи хайлава аса илсе каласа параять; класра вуласа тишкернӗ 1—2 кӗнеке (хайлав) ятне аса илсе калать пулсан.

**«4» паллӑ çакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен программӑра кӑтартнӑ кӗнекесене вулать, пӗр-пӗр кӗнекене ыттисем хушшинчен ун ячӗпе автор хушаматне пӑхса суйласа илеет, кӗнеке авторӗпе ячӗ, ӳкерчӗксем е кӗнеке ячӗпе унти ӳкерчӗксем тӑрӑх мӗн е кам çинчен çырнине ӑнкарайрать, урокра палӑртнӑ вӑхӑтра хайлава хӑй тӗллӗнех ӑшра вуласа тухаять, вӗрентӳçӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӗнекери сӑнарсене асӑнса тухма тата вӗсене сӑнлама пӗлет, халь çеç е маларах класра вуланӑ кӗнеке е хайлав çинчен каласа параять; уйрӑм темӑпа класра вуласа ушкӑнпа тишкернӗ пӗр-пӗр кӗнекен (хайлавӑн) ятне аса илеет пулсан.

**«3» паллӑ çакӑн пек чухне лартмалла:** ача кӗнекене вӗрентекен аса илтернипе çеç вулать, пӗр-пӗр кӗнекене ыттисенчен унӑн паллисем тӑрӑх вӗрентӳçӗ пулӑшнипе çеç уйӑрайрать, унӑн темине (кам е мӗн çинчен çырнине) кӗнеке хуплашкинчи е текстри ӳкерчӗксем тӑрӑх çеç ӑнкарайрать; урокра палӑртнӑ вӑхӑтра çӗнӗ кӗнекене пӑхса тухать, анчах та вӗрентӳçӗ тупма каланӑ хайлава хӑй тӗллӗн тупаймасть, класра халь çеç е маларах вуласа тухнӑ кӗнеке çинчен чуххӑмӑн çеç каласа пама тата сӑнарсене асӑнса тухма пӗлет, класра вуласа тишкернӗ кӗнекесен ячӗсене хӑш-пӗр темӑпа çыхӑнтарсан çеç аса илме пултараять пулсан.

II класра класс тулашӗнчи вулавшӑн асӑннӑ паллӑсенчен япӑхраххисене лартма юрамасть.

### 3 класс

**„5“ паллӑ çакӑн пек чухне лартмалла:** ача урок тӗлне кӗнекене вӗрентӳçӗ асӑрхаттармасӑрах е пулӑшмасӑрах вуласа килет, пӗр-пӗр кӗнекене унӑн паллисем. Вӗрентӳçӗ сӗннӗ тема тата хайне килӗшни тӑрӑх кӗнекесенчен çӑмӑллӑнах уйӑрса илме пӗлет, вулани çинчен каласа панӑ чухне хӑйӗн мӗн пур вулав ӑслайӗсемпе тата хӑнӑхӑвӗсемпе усӑ курать. Калаçӑва тимлӗн хутшӑнать. Текстра пӗр-пӗр вӗçленнӗ шухӑша кӑтартакан вырӑна (эпизода) уйӑрса илме. Ун çинчен тӗрлӗ мелпе (туллин, кӗскен, сӑмахлӑ ӳкерчӗк туса) каласа пама пултарать; класс тулашӗнчи вулав урокӗсенче тишкернӗ 1-2 çыравçӑн кӗнекисене çӑмӑллӑнах аса илеет пулсан.

**‚4‘ паллӑ çакӑн пек чухне лартмалла:** ача кӗнекесен ушкӑнӗсенчен вӗрентӳçӗ сӗннӗ темӑпа е сӗннӗ списокран хӑйне килӗшнӗ кӗнекене çӑмӑллӑнах суйласа илет пулсан; вулани çинчен каласа панӑ чухне вӗрентӳçӗ асӑрхаттарнипе хӑйӗн вулав ӑслайӗсемпе тата хӑнӑхӑвӗсемпе усӑ курать, класс тулашӗнчи вулав урокӗсен ушкӑнла ӗçне хастар хутшӑнать, вулани çинчен

вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е хатĕрплан тăрăх каласа панă чухне йăнăшсем тума пултарать, анчах хăйне мĕн килĕшни е килĕшменни çинчен каласа параять; класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче тишкернĕ 1-2 çыравçăн кĕнекисене аса илеет, анчах вĕсен ячĕсене асăнса тухнă чухне кăштах йăнăшать пулсан.

**„3‘ паллă çакăн пек чухне лартмалла:**ача пĕр-пĕр кĕнекене вĕрентӳçĕ сĕннĕ темăпа суйласа илме пĕлет. Анчах класс тулашĕнче вуламалли виçерен сахалтарах вулать, кĕнекене ушкăнпа сӳтсе явасĕçе хастар хутшăнмасть, класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче сӳтсе явнă кĕнекесен авторĕсене аса илме пултарать. Хайлавсен ячĕсене асăннă чухне йăнăшсем тăвать.

Класс тулашĕнчи вулавшăн ку класра та япăхрах паллăсем лартмалла мар.

## 4 класс

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май илемлĕ литература хайлавĕсене асăрхаттармасăрах вулать, тĕрлĕ пулăшу кĕнекисемпе (справочник, словарь т.ыт.те) усă курать, мĕн вулани тата унăн авторĕ çинчен уçăмлăн каласа парать, ача-пăча хаçат-журналне вуласах тăрать, пĕрремĕш хут тĕл пулнă кĕнекере мĕн çинчен çырнине кӳртĕм, аннотаци тата вĕçĕнче калани тăрăх чухлама пултарать, кирек мĕнле темăпа та темиçе авторăн, вĕсен кĕнекисен ячĕсене аса илейрет пулсан.
**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** сĕннĕ списокран ача хăйне килĕшекен кĕнекене суйласа илме пĕлет, анчах ку ăслайпа яланах усă курмасть, пулăшу кĕнекисемпе ăнăçсăртарах усă курать, яланах хăй тĕллĕн те мар; ача-пăча хаçат -журналне сайра хутра çеç вулать, кĕнекери кӳртĕмпе, аннотаципе, вĕçĕнче каланипе усă курать, анчах яланах мар; класс тулашĕнчи урок валли хушнă темăпа кĕнеке вуласа килет, урокра литература хайлавĕ çинчен каласа парайрать; класс тулашĕнчи вулавăн кирек хăш темипе те темиçе кĕнекен, вĕсен авторĕсен ячĕсене аса илейрет, анчах тĕп-тĕрĕсех калаймасть.
**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла: в**ĕренекен кĕнекене сĕннĕ списокран суйласа илме пĕлет, пулăшу кĕнекипе тупса панипе çеç усă курма пултарать, ача-пăча хаçат-журналне вуламасть; кĕнекери кӳртĕмпе, аннотаципе, вĕçĕнче каланипе вĕрентекен пулăшнипе çеç усă кураять; çитес урокăн темипе виçере кăтартнинчен сахалтарах вулать, литература хайлавĕ çинчен вĕрентекен пулăшнипе çеç калаять, йăнăшсем тăвать.
Класс тулашĕнчи вулавшăн ку класра та япăхрах паллăсем лартмалла мар.